**Республика кунне хатӗрленнӗ май**

# Кӗҫех врач офисӗн алӑкӗ уҫӑлӗ



**(Вӗҫӗ. Пуҫл. 1-мӗш стр.).**

Кунта ҫитсен ЧР Президенчӗ пирӗн районти ӗҫсене кӑткӑ тӗммипе танлаштарни тӳрре тухрӗ. Алӑ усса ларакан та, тӑракан та ҫук кунта. Пӗрлехи тӑрӑшулӑхпа ӗҫсем вӗҫленсе те пыраҫҫӗ ӗнтӗ.

– Пӗр кунта тунӑ ӗҫсем тесе ан пӑхӑр. Тӑваттӑн та, вун иккӗн те виҫӗ уйӑх ӗҫлерӗмӗр те, финиш ҫывхарса пырать пулин те, мӗн тунипе туманнине куллен тишкеретпӗр. Республикӑран ҫеҫ мар, Раҫҫей представителӗсем те килеҫҫӗҫке пирӗн ӗҫпе паллашма. Пите хӗретмелле ан пултӑрччӗ тесе ир пуҫласа каҫчен тӑрӑшатпӑр, – пӗр кӗтесре МДФ плитасем ҫапассине вӗҫлесе пынӑ май ӑшӑ кӑмӑлпа калаҫаҫҫӗ Геннадий Григорьев столярпа Владислав Николаев бригадир **(аялти сӑн ӳкерчӗкре)**.

Виҫӗ уйӑх хушшинче пӗтӗмӗшле практика врачӗн уйрӑмӗпе пӗрлех пӗр ҫуртра вырнаҫнӑ ял тӑрӑхӗн администрацийӗн пӳлӗмӗсене ҫӗнӗ сӑн кӗртрӗҫ «Моргаушавтотехсервис» уҫӑ акционерлӑ общество строителӗсем.

– Тавах строительсене. Вӗсем кӗске вӑхӑтра пӳлӗмсен стенисене пластик тата МДФ плитасем ҫапса илемлетрӗҫ, обойсем ҫыпӑҫтарчӗҫ, сӑрларӗҫ, алӑксене улӑштарса илемлетрӗҫ, урайне линолеум сарчӗҫ. Халӗ кашни кабинетах тулли кӑмӑлпа кӗретпӗр, – терӗ пӗрле ӗҫлекенсем строительсене пулӑшассинчен пӑрӑнманнине палӑртса тата вӗсене те тав туса пӗтӗмӗшле практика (ҫемье) врачӗн уйрӑмӗн врачӗ Эльвира Валерьевна Петрова (**ушкӑнри сӑн ӳкерчӗкре варринче - 1 стр.**).

Пӗрле ӗҫлекенсем тенӗрен, кунти медицина сестрисемпе санитаркӑсем пирки уйрӑм сӑмах. Эсир сӑн ӳкерчӗкре (сылтӑмран сулахаялла) куракан медицина ӗҫченӗсем чӑннипех тивӗҫлӗ ҫакна. Акӑ аслӑ категориллӗ шӑл тухтӑрӗ Юлия Николаевна Краснова 42 ҫул ял ҫыннисен сывлӑхӗшӗн вӑй хурать. Хӑйӗн ӗҫӗнче чӑн-чӑн ӑстаҫӑ вӑл. 16 ҫул медицина сестринче ӗҫлекен Татьяна Егоровна Кириллова та ӗҫре тӑрӑшулӑхпа палӑрать, аслӑ юлташӗсен ятне ҫӳлте тытать. 35 ҫул медсестрара тимлекен Неля Григорьевна Клементьевана тухӑҫлӑ та ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн 2001 ҫулта «ЧР сывлӑх сыхлавӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ» хисеплӗ ят пани те врач уйрӑмӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ. «Ҫынсем мана ача чухнех эсӗ медик пулатӑн тесе ҫирӗплетсе калани манӑн ҫула суйлама пулӑшрӗ. Перекет банкӗнче ӗҫлеме пуҫланӑскер медицина училищине вӗренме кайрӑм та 33 ҫул ҫак ӗҫре», – тет хӑйӗнпе каласнӑ хушӑра физиотерапи кабинечӗн сестри Светлана Ивановна Фомина.

... Юсав ӗҫӗсем вӗҫленменха. Эпир калаҫса ларнӑ хушӑра кӳршӗри кабинетра Светлана Ильинична Ильинапа Светлана Вячеславовна Фомина санитаркӑсем **(ҫӳлти сӑн ӳкерчӗкре)** тӑрӑшса сӑрлатчӗҫ. «Район пысӑк ӗҫе кӳлӗнчӗ те никамӑн та ҫывӑрса ларма юрамасть. Пӗрлехи ӗҫ пӗрлехи ӑнӑҫӑва ҫаврӑнӗ. Халӑх сывлӑхӗ пирӗн коллектившӑн малти вырӑнта. Чирлӗ ҫынна эмел ҫеҫ мар, сиплев ирттермелли хӑтлӑ кабинет та сывлӑх патӑр», – терӗҫ икӗ Светлана ӗҫрен самантлӑха та уйрӑлмасӑр.

– Шетмӗпуҫӗнчи пӗтӗмӗшле практика (ҫемье) врачӗн уйрӑмне уҫассипе пысӑк калӑпӑшлӑ ӗҫсем ирттерни ҫакӑнтан та курӑнать. Кунти юсав ӗҫӗсене пӗр миллион тенкӗлӗх пурнӑҫларӑмӑр, 200 пин тенкӗлӗх сӗтелпукан, 170 пин тенкӗлӗх медицина оборудованийӗ туянтӑмӑр, стоматологи кабинетне паянхи кун ыйтӑвне ҫитерессипе 290 пин тенкӗ хывrӑмӑр, – терӗ ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, «Муркаш районӗнчи тӗп больница» муниципаллӑ сывлӑха сыхлас ӗҫ учрежденийӗн тӗп врачӗ В. Г. Данилов.

Район ыран Республика кунне уявлама пуҫлать.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**



**Республика кунне ҫапла хатӗрленетпӗр**

# Хӑнасем куҫ хупса иртессе шанмалли ҫук

**(Вӗҫӗ. Пуҫл. 1-мӗш стр.).**

– Уҫма палӑртнӑ куна Культура ҫурчӗ хатӗр пулать, – терӗ шалта ӗҫлекен Ҫатракасси ял тӑрӑхӗн администрацийӗн специалисчӗ Г.В. Трофимов.

Ҫак кун тӗлне Кашмашра пурӑнакан ҫынсем те ҫурчӗсем умне тирпейлесе ҫитерессе шанас килет. Хальлӗхе кунта 10 киле яхӑн ҫурт умӗнче строительство материалӗсене пуҫтарман-ха. Хуҫалӑх пилораминче тирпейсӗррӗн выртакан вутӑ куписене те уява килнӗ тӗрлӗ регион ҫыннисем курмӑш пуласса шанаҫҫӗ пулӗ кунта.

Хӑнасем хӑйсен тӗлне ҫитсен вӗсем куҫӗсене хупса иртсе каясса шанса ларни вырӑнлах мар. Ҫавӑнпа та ҫӳлерех асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерессипе Ҫатракасси ял тӑрӑхӗн администрацийӗ те, «Свобода» хуҫалӑх администрацийӗ те тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнасса шанас килет.



Правлени умӗнче – пӗренесем.

Сӑмаха вара ҫак шухӑшпа вӗҫлес килет. Ҫак кунсенче Муркашран ытлашши инҫех те вырнаҫман район центрӗ витӗр тухса каймалла пулчӗ. Пӗлетӗр-и, ҫакӑн хыҫҫӑн хамӑр Муркаш кунран-кун илемленсе пынипе, ҫав илеме хамӑрах тума пултарнипе ӑшра мӑнаҫланмаллипех мӑнаҫлантӑм. Тусан, тӑрӑшсан, тирпей-илем пулать иккен. Хитре ҫӗртех пурӑнма кӑмӑллӑ, Ҫатракасси ял тӑрӑхӗнче пурӑнакансем те вырӑнта ертӳҫӗсемпе пӗрле пӗр шухӑшлӑн хӑйсем пурӑнакан ялсене йӗркелесе ҫитерессе шанас килет, вӗсен те хӑйсен ял, урам илемӗпе мӑнаҫланмалла пултӑр. Тирпейлӗх хӑнасемшӗн мар, хамӑршӑнах. Республика кунӗ хыҫҫӑн та тирпейлӗ ҫӗртех пурӑнас килет вӗт.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

**Республика кунӗ умӗн**



# Илемлӗх пӗр кунлӑх ан пултӑр

Юлашки вӑхӑтра Муркаш урамӗсем хитреленсе, илемленсе пынине пурте куратпӑр. Ҫулсем, тротуарсем хӗррисемпе лартса хӑварнӑ чечексем уйрӑмах илӗртӳллӗ. Мӗнле тӗрли кӑна ҫук пулӗ кунта? Анчах та нумаях пулмасть лартнӑ чечексем, ҫанталӑк ҫумӑрсӑр та шӑрӑх тӑнине пула, шанма тытӑнаҫҫӗ. Паллӑ ӗнтӗ, кун пек чухне вӗсене каҫ-каҫ шӑварассине йӗркелес пулать. Ҫак ӗҫе ҫынсем пачах хутшӑнмаҫҫӗ тесе каламастӑп, ҫапах та хӑш-пӗр чурӑс чунлисем чечексем шаннине курса тӑрсах икшер-виҫшер витре шыв ҫӗклесе шӑварса чечексене ҫӑлса хӑварма ӳркенеҫҫӗ. Уйрӑмах ҫакна уйрӑм ҫуртсенче пурӑнакансем пирки каламалла. Ун пекех чунсӑрланса каяс марччӗ. Тирпей-илем хамӑршӑнах вӗт. Республика кунӗ пулать те иртсе каять. Пирӗн вара малалла пурӑнмалла, ҫак илемлӗхе малашлӑх валли сыхласа хӑвармалла. Хамӑр ӗҫпе те, чунпа та илемлӗ пулар.

**Н. НИКИТИН, Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ.**

# Муркаш Ен уява йыхравлать

### *Республика кунне Муркаш районӗнче уявлассипе ҫыхӑннӑ тӗп мероприятисен программи*

**(Вӗҫӗ. Пуҫл. 1-мӗш стр.).**

**ИЮНӖН 24-МӖШӖ**

Тури чӑвашсен тумтирӗсен «Родные напевы в мерцании узоров» залне уҫни – Муркашри историпе краеведени музейӗнче 9 сехет те 30 минутра.

Муркаш районӗн паллӑ ҫыннисем пирки каласа паракан «Моргаушский район: живая связь времен» документлӑ выставкӑна уҫни – Муркашри историпе краеведени музейӗнче 9 сехет те 30 минутра.

Картингистсем хӑйсен пултарулӑхне кӑтартни – Муркашра 10 сехетре.

Халӑх пултарулӑхӗн «Родники России» XVI Пӗтӗм Раҫҫей фестивальне хутшӑнакан коллективсем хӑйсен пултарулӑхне кӑтартса утни – Муркашра 10 сехетре.



Уява савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура уҫни – Муркашри тӗп сцена ҫинче 11 сехетре.

Халӑх пултарулӑхӗн «Родники России» XVI Пӗтӗм Раҫҫей фестивальне хутшӑнакан коллективсен «Чувашия, мы славу тебе поем!» концерчӗ – Муркашри тӗп сцена ҫинче 11 сехет те 30 минутра.

«Упорным трудом над тонким полотном мы стали великим народом» фольклорпа этнографи представленийӗ – Муркашра район администрацийӗн ҫурчӗ умӗнче 12 сехетре.

Ачасен пултарулӑхӗн «Солнечная мозаика» фестивалӗ – Муркашри Ҫӗнтерӳ паркӗнче 12 сехет те 30 минутра.

Спорт уявӗ – кире пуканӗ ҫӗклессипе, бокс, ирӗклӗ кӗрешӳ, канат туртасси, волейбол енӗпе ӑмӑртусем – Муркашри «Сывлӑх» физкультурӑпа спорт комплексӗнче 12 сехет те 30 минутра.

Лаша спорчӗн ӑмӑртӑвӗсем. Шупашкарти лаша спорчӗн шкулӗнче вӗренекенсем хӑйсен пултарулӑхӗпе паллаштарни. Лаша спорчӗн «Отрадное» шкулӗн казакӗсен джигитовки – Муркашра 14 сехетре.

«Алла-аллӑн утар» – районти «Ҫулталӑк ҫемйи» конкурс ҫӗнтерӳҫисене чысласа ирттерекен фольклор уявӗ – Муркашри тӗп сцена ҫинче 16 сехетре.

«Фестиваль красок» – мода театрӗн представленийӗ – Муркашри тӗп сцена ҫинче 17 сехетре.

«В добрый путь» – шкултан вӗренсе тухакансен балӗ – Муркашри тӗп сцена ҫинче 18 сехетре.

«Звездный калейдоскоп» – чӑваш эстрада ҫӑлтӑрӗсен концерчӗ – Муркашри тӗп сцена ҫинче 20 сехетре.

Уяв фейерверкӗ – 23 сехетре.

